**МАРУÇĂМ!**

Сан патна çыратăп, çыратăп, анчах январь уйăхĕнчеппе санран пĕр йĕрке те илни çук. Те сывă эсĕ, те аташса мана мансах кайрăн,— халиччен ниепле те пĕлме пултараймастăп. Эпĕ урăх вырăнта, пысăк хаçатра ĕçлетĕп, кивĕ вырăнтан мана куçарни нумай пулать ĕнтĕ. Ĕнер сан патна 900 тенкĕ укçа куçартăм, унсăрăн пуçне, аттестатпа илсех тăратăн пулĕ тесе шанатăп. Нумаях пулмасть эпĕ сана асăнса пĕр сăвă çырнăччĕ.

Вăрçă кăварĕ витĕр вăркăнатăп,
Мана шыранă пек шилет тăхлан.
Анчах та эсĕ пĕр сехет кăна та
Тухмастăн, савнă тусăм, асăмран.



Сана чунран юратнă манăн туйăм
Чĕрем-пĕверĕм витĕр сăрхăннă;
Сана эп савнине сăнанă уйăх;
Пире пăхса хĕвел те савăннă.

Сăну çиçсе вылярĕ манăн куçăн,
Черкке пек тăрă куçăн шăрçинче.
Сан кăмăлун ăшши, тивлетлĕ тусăм,
Паян та чăмăркка тутам çинче.

Сана курма паян çул çук, тăванăм,
Ман çулăм вут та çулăм ăшĕнче,
Ăна снаряд та бомба чаваланă,
Юлташăмсен чĕр юнĕ ун çинче.

Вăрçă уй-хирĕнче ем-ешĕл курăк
Шăтсан, киле тин эпĕ таврăнăп,
Ирхи хĕвел хĕлхемĕ витĕр курăп
Сана та хам çуралнă таврана.

Самант хушши те тăхтамасăр вилĕм
Вĕçет, карса киревсĕр аллине.
Тен, килĕ вăл, — вара мана хам килĕм
Кĕтсе уçаймĕ сăрлă хапхине.

Анчах çĕре кĕрсен те, юлăп эпĕ
Кăвар чĕлхеллĕ халăх асĕнче;
Чăваш такмакĕпе чăваш халапĕ,
Чаппа хисеп çӳретĕ ман çинчен.

Сăпка юррисенче çул ятăм уçĕ,
Вăл кĕрĕ ачасен чĕрисене.
Вилсен те, эпĕ пурăнăп, Маруçăм,
Кĕрсе ят ларĕ хам сĕтел умне!

Сăввине укçашăн е сана юрасшăн çырман, мĕн шухăшланă, ăна васкаса шăратнă. Ку çыру хыççăн та ответ килмесен урăх пĕрре те çырмастăп.

Якку

20.VI.1943